ЮБИЛЕЙСЕМ

# ВРАЧ ТА, СĂВĂÇ ТА...



*Андриян Александрович Григорьев сăвăç пултарулăхĕпе «Сувара» вулакансем пĕрре çеç мар паллашнăччĕ ĕнтĕ. Унăн сăввисем хитре, сулмаклă, пирĕн кулленхи пурнăçа уççăн сăнлаççĕ, лирики вара çамрăксенне çеç мар, çулланнисен чĕрине те хускатать.*

*Андриян чăвашла çеç мар, вырăсла сăвăсем те аван хайлать. 1999 çултах унăн вырăсла сăввисем «Дружба» ятпа уйрăм кĕнекен пичетленсе тухрĕç. «Унăн сăввисенче поэтăн хăйнеевĕрлĕхĕ, пурнăç шăпи, пирĕн пурнăçри пулăмсене хаклама пĕлни, хĕрӳ чĕреллĕ юрату уççăн палăраççĕ», — тесе çырнă кĕнекен ум сăмахĕнче. Çакă тĕрĕс те. Сăввисем вăл пиççе çитнĕ поэт пулнине çирĕплетеççĕ. Çавăнпа пĕрлех Андриян Александрович ăста сиплевçĕ те. Нурлат районĕнчи Хуралту ялĕнче çуралса ӳснĕскер, вăл Хусанти патшалăх медицина институтĕнчен ăнăçлă вĕренсе тухнă. 11 çул Ульяновск облаçĕнчи пĕр районти больницăра психоневролог пулса вăй хунă.*

*1993–1995 çулсенче Хусанти ГИДУВра нерв чирĕсем енĕпе ординатурăра пĕлӳ илнĕ, çав тапхăрта М.Горький музейĕ çумĕнчи Марк Зарецкий ертсе пыракан литература пĕрлешĕвĕн ĕçне хутшăннă.*

*Сăвăсем вăл 15 çул ытла çырать ĕнтĕ. Вĕсем районсенчи тата тĕрлĕ республикăсенчи хаçатсенче пичетленсех тăраççĕ.*

*Мăшăрĕпе иккĕшĕ виçĕ ывăл та пĕр хĕр ӳстереççĕ.*

*Нумаях пулмасть Андриян Александрович Нурлатри тĕп больницăра ачапăча неврологĕ пулса ĕçлеме тытăнчĕ. Ăна чĕререн çĕнĕ ĕçре çитĕнӳсем тума сунатпăр, çуралнă кун ячĕпе саламлатпăр (январĕн 27-мĕшĕнче Андриян Александрович 40 çул тултарать).*

*А.Григорьевăн çĕнĕ сăввисемпе паллашăр.*

**Евгений ТУРХАН.**

### ХĔЛЛЕХИ

Шурă-кĕмĕл сăрсене
Хĕл Мучи суйларĕ,
Вăрмана вăл, хирсене
Тăрăшса сăрларĕ.

Шеллемерĕ-çке юрне,
Сапаларĕ, сарчĕ;
Купаларĕ пӳрт умне,
Картишне тултарчĕ.

Тухăр, тухăр, ачасем,
Сăрт çине хăпарăр;
Илсе килĕр çунасем —
Ярăнăр та анăр...

Тăхăнса йĕлтĕрсене
Вăрмана чуптарăр;
Нумайрах йĕрĕрсене
Çавăнта хăварăр.

Хĕллехи вăрманĕнче
Юмахсем канаççĕ;
Пысăк чăрăш айĕнче
Калаçса лараççĕ...

### ШУПАШКАР

Тĕлĕнтертĕн мана, Шупашкар,
Хăвăн чаплă, хитре сăнупа.
Ман килес, çывăхрах паллашар, —
Тараватлă-мĕн эс хăнупа.

Килĕштертĕм те саврăм сĕре,
Тус теесшĕн сана, Шупашкар;
Санпа пулĕ ялан ман чĕре,
Çавăнпа çывăхрах паллашар.

Шупашкар, Шур хула, тус пулар,
Килĕп эпĕ татах хăнана;
Çавăнпа çывăхрах паллашар, —
Лайăхрах пĕлеесшĕн сана.

Пĕлеесшĕн чунна, шухăшна,
Чăвашсен тĕп хули — Шупашкар!
Ăнтăлатăп санпа туслашма,
Çавăнпа çывăхрах паллашар.

### ЧĔРЕНЕ

Мĕншĕн пултăн ытла туякан —
Пăлханса вăркăшатăн, чĕре?
Хускалсан — чарăнми тапакан,
Ан хумхан, ан хурлан-ха сĕре.

Сан çаплах сахал мар тапмалла
Ачасем çитĕнсе çитиччен;
Пурнăç çулĕ выртать тăвалла,
Шăпапа килĕшсе çитиччен.

Малаллах талпăнса утмалла,
Хăпарса çитиччен ту çине...
Вăйран кайрăн-тăк мĕн тумалла?
Чикме çук кăкăра çĕннине.

* * *

Пуйăссем хăнана йыхăраççĕ;
Кĕç хăй хыççăн чĕнет чукун çул.
Тусăмсем тĕлĕкре курăнаççĕ, —
Пĕр-пĕрне курманни миçе çул!

Кĕскелет майĕпен пирĕн пурнăç;
Сисĕнми иртсе кайĕç çулсем.
Чуна çывăх туссем урăх пулмĕç;
Ах, мĕн-ма аякра-ши вĕсем?

Манаймастăп сире, тунсăхлатăп,
Хаклă, çывăх юлташ-тусăмсем.
Астăватăп сире, юрататăп;
Йыхăраç хăнана пуйăссем.

Атьăр-ха, тусăмсем, тĕл пулатпăр, —
Пĕр-пĕрне курманни миçе çул!
Атьăр-ха, тусăмсем, пухăнатпăр;
Çыхăнтарĕ пире чукун çул.

Николай ЗИМИН

### ПИЛЛЕЙМЕРĔМ САНА, ХĔР-ТĂВАНĂМ

*Йăмăкăма Антонина Трофимовна КАЗАКОВĂНА, Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел шкулĕн учительницине.*

Пиллеймерĕм сана, хĕр-тăванăм,
Яш пулса ӳснĕ чух пĕр килте.
Чун-чĕре тилмĕрсе кĕтнĕ канăç,
Иксĕлми илĕртӳллĕ илем.
Асăнсан, пурнăç çунчăкĕ витĕр
Ăс-тăна тем амак шĕкĕлчет,
Иртнĕ кунăн пурри те, çукки те —
Пирĕн пурлăх — чĕре тĕпĕнче.
Айăмрах пек аннемĕр чĕрçи те,
Хуп сăпка та сикет пек пӳртре,
Сăпкаран уртса янă пир-çитĕ
Улача кĕпепе пĕр вĕçрен.
Çăкăр çук, çĕр улми те хисеплĕ,
Хуранта исленет вĕлтĕрен,
Эсĕ пур çĕрĕн-кунĕн çиесшĕн
Татăлса çурăлас пек йĕрен.
Кукамай ĕнĕрлет вăхăт-вăхăт
Те сана та мана пĕтĕрсе,
Кĕллинче çитĕнеççĕ пек хăвăрт
Пирешкел вăрçă тивнĕ чунсем.
Кун каять, кун килет, ватăлатпăр,
Чун пулсан та ялан çирĕмре.
Юп курса пурăнма тăрăшатпăр
Турă панă шăпа-ĕмĕре.
Пурнăçра тĕрлĕрен пур пуянлăх,
Пĕр пек мар çĕр çинче çын шăпи.
Лере çеç эпир пурте пĕр танлă —
Уншăн ма кулянас-ха эппин.
Хăвалать малаллах харсăр вăхăт,
Çĕтĕлсе çĕнелет самана.
Кам пулса ĕлкĕрейтĕр халь сыхă,
Пурнăç хăй улталасшăн çынна.
Ăнлансан, пурнăç ванчăкĕ витĕр
Чĕреме тем амак шĕкĕлчет.
Пурте пур халь — çĕнни те, кивви те,
Мĕн пулсан та вăл — пирĕн элчел.
Мулшăн мар ĕмĕр-ĕмĕр тылланнă
Тар тăкса ĕççинче чăн чăваш.
Тав Турра! Пирĕн пурпĕр пуянлăх:
Тус-тăван та кил-йыш, хурăнташ.
Пиллеймерĕм сана, хĕр-тăванăм,
Вăрăм ĕмĕр, телей, юрату.
Эс пуян — ачусем йышлă санăн,
Таврăнсассăн кĕтме хирĕç тух.

Дмитрий Васильевич Колотилин лайăх çемьере çуралса ӳснĕ — ашшĕ колхоз бригадирĕ, амăшĕ — учительница. Ывăл çуралсан ашшĕ-амăшĕ питĕ хĕпĕртенĕ, ара, малтанхи икĕ ачи хĕрсем-çке.

Дима йĕркеллех ӳснĕ: ĕç патне алли пынă, шкулта лайăх вĕреннĕ, çăмăллăнах ĕлкĕрсе пынă. Вăтам пĕлӳ илсенех вăл çара кайнă. Виçĕ çултан десантник тăван яла таврăннă — пăхса ытараймăн: йăрăс пӳллĕ, çӳллĕ, çаврăнăçуллă, утти çăмăл, сăнĕнче арçын паллисем хитрен палăраççĕ, хулăн сасси уçă, итлеме кăмăллă, калаçнă чух çынна куçран пăхать. Хĕсмет хыççăн канас темерĕ çамрăк çын, тӳрех учительсем хатĕрлекен института куçăн мар майпа вĕренме кĕчĕ, шкулта математикăпа физика вĕрентме пуçларĕ.

Шахматсăр пуçне Дмитрийĕн тепĕр «çитменлĕх» пурччĕ — кĕрешӳ. Сабантуйсене тахçан малтан хатĕрленме тытăнатчĕ. Икĕ метр вăрăмăш миххе çĕтĕк-çатăк, хăйăр тултаратчĕ те кĕрешетчĕ унпа: хăй айне те персе чикет, пуçĕ урлă та çавăрса пăрахать, ӳкет-тăрать... Картишĕнче çакăнса тăракан «грушăна» кашни кунах тӳнккет, икĕ пăт туртакан кире пуканĕсемпе мечĕкпе вылянă пек вылять. Ун пек çаврăнăçулли, вăйли нихăçан та кĕрешӳçĕсем хушшинче урăх тупăнман. Пĕрремĕш приза — такана, яланах Колотилин çĕнсе илнĕ: такана пурте курмалла çӳле çĕклет те ĕнси çине хурса машина патнелле утать. Куракансем мухтаса кăшкăраççĕ, алă çупаççĕ. Кӳршĕ район сабантуйĕсенчен те çĕнтерӳçĕ пулса таврăнатчĕ.

Вăхăт чупать, Дима ура çинче çирĕп тăрать, авланасси çинчен те шутлама чух ĕнтĕ. Кунта та вăл хăйне вĕли-шали тытман: çамрăк учительницăпа Степанида Трофимовнăпа туслă пулнă, ĕç-пуç туй патнеллех пынă. Хутшăнăвĕсем вĕсен питĕ шала кайнă имĕш. Усал чĕлхесем çамрăк учительница ытла хăвăрт ӳт хушать тесе тавăратчĕç...

Çын пĕлмест те, Турă пĕлет теççĕ. Кĕркуннерен Стеша пурнăçĕ арпашăнсах пĕтрĕ. Пĕтĕм айăпĕ райцентр больницинчи тин кăна диплом илнĕ врачра. Татьяна Михайловна хитре, ăслă — такам юратса пăрахĕ. Дима станцинчен машина кузовĕ çинче килсе шăнса пăсăлнă, ӳпки шыçнă. Больницăна выртмах тӳр килнĕ, сиплевçи — Татьяна Михайловна.

Врач пациентăн юн пусăмне пĕлме унăн аллине тытать, черчен пӳрнипе артерине шыраса тупать. Çак вăхăтра иккĕшне те асамлă хăват пырса çапрĕ-тĕр, врачăн аллисем лĕнчĕрех кайрĕç; каччă алли хĕр чĕрçи çинех ӳкрĕ. Кĕтмен ăнсăрт иккĕшне те вăтантарчĕ, пичĕсем пиçнĕ улма пек хĕрелчĕç. Юрату çавра çил пек хăвăрт килсе çитрĕ, çамрăксен кĕçех туй кĕрлерĕ. Степанида Трофимовна кӳреннипе, кĕвĕçнипе, хуйхипе çемçе минтере çĕрĕ-çĕрĕпе йĕпетрĕ. Дима унпа каçа-

## ТАВĂРУ



ру ыйтса калаçасси пирки шутламарĕ те, мĕн тери йăнăшрĕ çамрăк. Хуйхи тамалнă май улталаннă хĕр чĕри тарăхупа тулчĕ, пуçĕ тавăру çинчен кăна шутларĕ.

Стешăн кукамăшĕ, кайран амăшĕ вĕрӳ-сурупа аппаланни çинчен Дима илтнех-тĕр (лешсем патне ял-йыш та сахал мар укçа йăтса утнă-çке). Анчах тĕшмĕш тесе ĕненсех пĕтермен-тĕр. Пĕлмен çав вăл, епле мăнтăр хура пĕлĕтсем тин чăмăртаннă çемьене хупăрласса.

* * *

Димăпа Татьяна телейлĕн пурăннă: вĕсен професийĕсем лайăх, пурăнмалли пур, иккĕшĕ те çамрăк, сывă, пĕр-пĕрне юратаççĕ. Кĕçех Дима йывăрланнă арăмне ача çуратма ăсатать. Яла çемье ывăлпа таврăнать. Савăннипе анне пулма ĕлкĕрнĕ арăмне пăчăртаса чунсăр туманни кăна вĕт. Телейлĕ çемье çине пăхса ял-йыш та савăннă.

Çулталăк та иртмерĕ пулĕ, яла хура хыпар тухрĕ. Колотилинсен ывăлĕ «кăшт мĕнтерех» тет. Эпĕ курнă чух арçын ача пĕрре урлă каçнăччĕ ĕнтĕ: мăнтăркка, илемлĕ «шăхличĕ» пӳлĕмре чупса çӳрет, «атте», «анне» тата темĕн калать. Ытти ачасенчен темĕнле урăхларах чупни сисчĕвлентерчĕ мана: пĕр чарăнмасăр стена патĕнчен стена патне васкать, калăн, ют çынна асăрхамасть те. Хам ăшра: «Мĕн-тĕр пулсан та ӳснĕ май иртет», — тесе лăплантăм. Амăшĕ ывăлĕпе таçта та çитнĕ, тĕп хулари профессорсем патне те кайнă, анчах усси пулман.

Мăшăрсен иккĕмĕш ача пирки тăхтасчĕ ĕнтĕ, çук çав, кĕçех Колотилинсен çемйине тепĕр пепкехĕрача килет. Вăхăт иртнĕ май татах ялта сăмах сарăлчĕ — «хĕрĕ те чирлĕрех».

Пĕр виçĕ çултан Колотилинсем ялтан хулана куçрĕç, ял-йыш майĕпен вĕсене манчĕ.

Тата вунă çул иртрĕ. Çĕпĕре командировкăна кайнăскер, Хусана таврăнатăп. Ĕпхӳрен иртсен çурçĕр хыççăн пĕр чарăнура вакуна шавлă ушкăн кĕчĕ: республика съездĕнчен таврăнакан делегат-учительсем иккен.

Купене хĕрĕх пиллĕксенчи хăрарăм кĕрсе пушă вырăна йышăнчĕ. Вăтам пӳрен кăшт çуллĕрех, яка тумланнă, сарă çӳçне илемлĕ пуçтарнă. Куçкĕски çине пăхса тутисене, куç харшисене тӳрлеткелерĕ. Телейлĕ çын пек курăнма тăрăшса йăл куллине сăнĕнчен тартмарĕ. Тен, мана палласа илнипе çапла хăтланчĕ вăл? Эпĕ Дима юлташĕччĕ-çке. Çемйипе, юратакан упăшкипе, виçĕ ăслă, сывă ачипе пĕр чарăнми мухтанчĕ.

Намăссăррăн каппайлanса ларни мана уртарсах ячĕ:

— Колотилинсен ним айăпсăр ачисене мĕн туса хутăн эсĕ?

Пуçран кисменпе çапниех пулчĕ ку хĕрарăмшăн, тӳрех салхулланчĕ, пуçĕ усăнчĕ. Тем вăхăтран тин тĕтреленнĕ куçĕсене ман çине çĕклерĕ:

— Мĕншĕн вăл ман пурнăçа таптарĕ, вĕри асфальта катокпа якатнăн иртсе кайрĕ. Манăн... Манăн пурте пур... телейсĕр пуçне.

Пуйăс Хусан станцине çитрĕ, эпир сывпуллашрăмăр. Стеша пулчĕ ку. Вăл ман ыйтуран пăрăнманни мана çав тери тĕлĕнтерчĕ. Элеклеççĕ теме пултаратчĕ вĕт-ха, çитменнине эпир Димăпа юлташсем, калаçу ун патне те çитĕ е каласа патăр терĕши? Кам пĕлет.

Тепĕр пилĕк çултан эпĕ чăнах та Колотилинсем патне çитрĕм: Дима ир ватăлма пуçланă, Татьяна Михайловна çӳçне сăрланă (хăйĕн тахçанах кăвакарнă-çке), сăнĕпе каччă чухнехи ашшĕне аса илтерекен ывăлĕ, вунсаккăрти хитре хĕрĕ... Вĕсем «кăшт чирлĕреххи» сăнасарах пăхмасан паллă та мар.

Эпир чылайччен лартăмăр, иртнисене, юлташсене аса илтĕмĕр. Анчах пуйăсра Стешăна курни пирки шарламарăм. Халĕ те (нумай çул иртрĕ ĕнтĕ унтанпа) пĕлместĕп: тĕрĕс турăм-ши, çук-ши? Врачсем каланине ĕненчĕрех, «резус-факторсем пĕр-пĕринпе килĕшсе тăманни» витĕм кӳнĕ пултăр. Тен, çакă чăнах та тĕрĕс.

**Михаил ГОРШЕНИН.**
**Хусан.**